Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

18 (7658) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Район кунне анлăн паллă турăмăр**

## Савăнатпăр Муркашсен ĕçĕ-хĕлĕпе

Кăçал районăмăр йĕркеленнĕренпе 65 çул çитнине районта пурăнакансем аван пĕлеççĕ. Иртнĕ çак сумлă кун-çула халăх умне хаçат страницисем урлă туллинреххĕн кăларассине нумайăшĕ тӳпе хыврĕ. Нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕнче К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче районăн юбилейне анлăн уявлани уявсемпе аса илӳсен кăшăлĕ пулчĕ. Савăнăçлă тĕл пулăва районăмăр аталанăвĕшĕн ырми-канми ĕçленĕ тата рынок хутшăнăвĕсем вăй илнĕ вăхăтра та Муркаш Ене аталантарассишĕн кунне-çĕрне манса вăй хуракансем, пархатарлă ĕçшĕн вĕсене тав тăвакансем пуçтарăнчĕç. Район 65 çул тултарнине уявлама хамăр республикăри пуçлăхсемпе кӳршĕ районсемпе Чул хула облаçĕнчи Спасски, Мари Эл Республикинчи Туçи Çармăс тата Пушкăрт Республикинчи Шаран районĕсен ертӳçисем хутшăнчĕç. Вĕсем ăшшăн саламлани, пирĕн район ĕçченĕсен ĕçне сума суни, уява йĕркелекенсем çĕр ĕçченĕсене савăк канма условисем туса пани театрти савăнăçа ӳстерчĕ кăна.



Малтанах район пуçлăхĕ Ю. Иванов районăн кун-çулне тата ĕç-хĕлне çутатса доклад туса пачĕ. Унăн сăмахĕсене район аталанăвне пысăк тӳпе хывнă хамăрăн ентешсем хăйсен асаилĕвĕсемпе çирĕплетни уяв савăнăçне хăпартрĕ.

Уяв парнесемсĕр те пулмасть. Район пуçлăхĕ ĕçре малтуртăмлă вăй хунă коллективсене, ырми-канми ĕçленĕ уйрăм ĕçченсене Хисеп грамотисем, дипломсем, укçан премисем, çĕнтерӳçĕ хăйăвĕсем, медальсем парса чысларĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн «Районти предприятисемпе организацисем тата учрежденисем хушшинчи 2008 çулхи экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен» йышăнăвĕпе ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче Ильич яч. хис. (1-мĕш вырăн), «Герой» (2-мĕш вырăн), «Ударник» (3-мĕш вырăн) хуçалăхсем палăрнă. Вĕсемпе пĕрлех Суворов яч. хис. хуçалăх лайăх ĕçленине палăртнă.

Промышленность предприятийĕсем хушшинче малта «Сеспель» хупă акционерлă общество. 2-мĕш вырăнта «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă общество. Виççĕмĕшсем Мăн Сĕнтĕр райповĕпе «Муркашри сĕт завочĕ» уçă акционерлă общество.

Ял тăрăхĕсем хушшинчи ăмăртура Муркаш ял тăрăхĕ çĕнтернĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсенче Катькассемпе Уйкас Янасалсем. Вĕсемпе пĕрлех Йӳçкасси ял тăрăхĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

1-мĕш вырăншăн 1-мĕш степеньлĕ дипломпа 12 пин тенкĕ укçан преми, 2-мĕш вырăншăн 2-мĕш степеньлĕ дипломпа 8 пин тенкĕ укçан преми, 3-мĕш вырăншăн 3-мĕш степеньлĕ дипломпа 5 пин тенкĕ укçан преми тата пĕрремĕш вырăна тухнă ял хуçалăх предприятине Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев ячĕллĕ кубок пама йышăннă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн «Районти килти хушма хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем тата ял хуçалăх предприятийĕсен ĕçченĕсем хушшинчи 2008 çулхи экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен» йышăнăвĕпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем хушшинче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Хураçкари Инна Вячеславовна Черновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ çĕнтернĕ. КФХ ертӳçи диплом тата 5000 тенкĕ укçана тивĕç пулчĕ.

Килти хушма хуçалăхсем хушшинчи ăмăртура Ильинка ял тăрăхĕнчи Мăн Шашкарти Александр Владимирович Мерлов хуçалăхĕ мала тухнă. Хуçалăх ертӳçи диплом тата 3000 укçан премие тивĕçрĕ.

Комбайн экипажĕсем хушшинче:

пĕрремĕшĕ – Суворов яч. хис. хуçалăхри Радонеж Виссарионович Кузнецов экипажĕ. Вĕсем АКРОС-530 комбайнпа 1622 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Ĕç паттăрĕсене 1-мĕш степеньлĕ диплом, «2008 çулхи вырмари чи лайăх экипаж» хăю тата 3 пин тенкĕ укçан преми парасси пирки пĕлтерчĕç;

иккĕмĕшĕ – Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич Никитин экипажĕ. Вĕсем «Вектор» комбайнпа 1345 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Ĕç паттăрĕсене 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 2,5 пин тенкĕ укçан преми парасси пирки пĕлтерчĕç;

виççĕмĕшĕ – Ильич яч. хис. хуçалăхри Юрий Петрович Егоров экипажĕ. Вĕсем «Енисей-1200» комбайнпа 864 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Ĕç паттăрĕсене 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 2 пин тенкĕ укçан преми пама йышăннă.

Водительсем хушшинче:

пĕрремĕшĕ – «Оринино» хуçалăхри Иван Алексеевич Ершов. Вăл 65556 тонна-километр ĕç тунă. Çавăншăн ăна 1-мĕш степеньлĕ диплом, «2008 çулхи чи лайăх водитель» хăю тата 1,5 пин тенкĕ укçан преми парасси пирки пĕлтерчĕç;

иккĕмĕшĕ – «Ударник» хуçалăхри Александр Ермогенович Анисимов водитель. Вăл 64760 тонна-километр ĕç тунă. Çавăншăн ăна 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1,2 пин тенкĕ укçан преми парасси пирки пĕлтерчĕç;

виççĕмĕшĕ – «Герой» хуçалăхри Арефий Александрович Мясников. Ăна 51200 тонна-километр ĕç тунăшăн 3-мĕш степеньлĕ диплом тата пин тенкĕ укçан преми пама йышăннă.

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

**Республикăра**

## Çĕнĕ центр уçăлчĕ



**ЧР Правительстви халăх сывлăхĕшĕн пысăк ĕç туса иртерет. Иртнĕ кунсенче Шупашкарта травматологи центрĕ ĕçлеме пуçларĕ. Кунти пĕрремĕш операци пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче иртрĕ.**

**Травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕ Раççейри пур субъектра пурăнакансене те пысăк квалификациллĕ травматологи пулăшăвĕ парайрать. Паянхи куна Атăл тăрăхĕнчи федераллă округра кăна эндопротезировани операцийĕсене 13 пин çын кĕтет.**

**Травматологи центрĕ тĕнче стандарчĕсене тивĕçтерекен паянхи оборудованисемпе тата тĕнчере малта пыракан клиникăсенче опыт пухнă специалистсемпе пуян.**

**Хĕл ăсатăвĕ**

## Сывă пул, сивĕ хĕл!




***Çăварни эрнинче районти ял тăрăхĕсенче Хĕл ăсатăвĕн уявĕсем иртрĕç. Ăшă çу кунĕсемшĕн тунсăхланă ял çыннисем хĕле пысăк кăмăллпах ăсатрĕç. Уявсенче юрă-кĕвĕ янăрарĕ, çамрăксем спорт вăйисенче вăй виçрĕç, катаччи ярăнчĕç, çăварни икерчи астиврĕç.***

***Сăн ӳкерчĕкре: Муркашра иттернĕ Хĕл ăсатăвĕн уявĕнче.***

## Пысăк спорт уявĕ – Муркашра

Икĕ кун хушши, февралĕн 27-28-мĕшĕсенче, Муркаш хăнасене йышăнассипе республикăра чи пуянни пулчĕ пулĕ. 21 район команди вăй виçме пулчĕ-çке республикăри тăваттăмĕш хĕллехи ялти спорт вăййисенче. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче пирĕн район çамрăкĕсем – волонтерсем – кашни «хăйĕн» район командине кĕтсе илчĕ, ăмăрту вырăнĕсемпе паллаштарчĕ.



Пуçтарăннисене саламлама Чăваш Республикин спортпа туризм министрĕ А. Николаев, ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев та килсе çитрĕç. Салам сăмахĕсемпе пĕрлех вĕсем ялти спорт вăййисем спорта ял ĕçченĕсем хушшинче ытларах сарма пулăшнине палăртрĕç. Муркаш район пуçлăхĕ Ю. Иванов та Муркаш çĕрĕ çине пухăннисене ăнăçусем сунчĕ.

Пĕр харăсах темиçе вырăнта спортăн тĕрлĕ енĕсемпе ăмăртрĕç районсенчен килнĕ чи вăйлă та хастар спортсменсем. Пĕрремĕш кунне йĕлтĕрпе чупасси, полиатлон, кире пуканне çĕклесси тата унпа тĕрлĕ хăнăхтарусем тăвасси, шахматла вылясси, шывра ишесси, çемье командисен ăмăртăвĕ тата механизаторсен ăмăртăвĕ иртрĕ.

Механизаторсен ăмăртăвĕ «Сельхозтехника» предприяти площадкинче куракансене 9 сехет çурăрах пуçтарчĕ. Хĕрарăмсем те курма пынисен шутĕнче пулни кăштах тĕлĕнтерчĕ те, кайран вара, трактор рулĕ умне ларакансен списокĕпе паллашнă хыççăн, тĕлĕнмелли татах та тупăнчĕ. Ăмăртакансем хушшинче те икĕ хĕрарăм пур иккен – Шупашкар районĕнчи Маргарита Прокопьева тата Вăрнар районĕнчи Надежда Семенова. Надежда, сăмахран, икĕ çула яхăн Германире тракторпа ĕçленĕ. Маргаритăн ĕç стажĕ вара 30 çултан иртет. Çак хастар хĕрарăмсем арçынсемпе тан ăмăртăва хутшăнса лайăх результатсем кăтартма пултарчĕç: программăпа палăртнă ĕçсене типтерлĕ, кĕске вăхăт хушшинчех пурнăçларĕç. Механизаторсен ăмăртăвĕ тракторпа каяссипе çеç вĕçленмерĕ-ха. Вĕсене йĕлтĕрпе чупассипе, пневматикăлла винтовкăран тĕл перессипе те тĕрĕслерĕç. Малти вырăна Йĕпреçсем тухрĕç. Муркашсем ку ăмăртура 9-мĕш çеç пулчĕç.

12 сехет тĕлне шахматла выляма 23 шахмат хăми хатĕрччĕ. Шахмат утăмĕсене тăвиччен кашни выляканах хыççăн тата мĕнлерех утăмсем пулассине шутласа куçни палăрчĕ. Район чысне хӳтĕлемелле-çке, кӳршĕпе выляни мар. Çак интереслĕ те пуçа самаях çĕмĕрттерекен вăйă чылая тăсăлчĕ. Кунта Сĕнтĕрвăрри командине çитекенни пулмарĕ. Муркашсем 12-мĕш вырăна çеç тухма пултарчĕç. Апла пулсан районта шахматла выляссине вăйлăрах аталантармалла.

Шывра ишессипе вара пирĕн район команди пьедестал çине хăпарма пултарчĕ – 3-мĕш вырăна тухрĕ. Уйрăмшарăн ишесси те, хĕрарăмсемпе арçынсен хутăш эстафети те пулчĕ программăра. Спортăн ку енĕпе каллех Йĕпреçсем палăрчĕç.

Кире пуканне те тĕрлĕ виçери участниксем йăтрĕç, тĕрлĕ хăнăхтарусем турĕç. Канашсен команди пуринчен те вăйлăрах пулчĕ, вĕсене Муркашсем кăшт çитеймерĕç - иккĕмĕш вырăна тухрĕç.

**(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕкре: район команди.**

**Хушма суйлав**

## Депутата Ю.В. Перцев суйланнă

Иртнĕ вырсарни кун, мартăн 1-мĕшĕнче, пĕр мандатлă 4-мĕш Макаçи суйлав округĕпе Ильинка ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутатне суйлассипе хушма суйлав иртрĕ. Муркаш территори суйлав комиссийĕ пĕлтернĕ тăрăх, суйлавçăсен списокне кĕртнисен хисепĕ 123 çын. Суйлава 100 çын хутшăннă. 1 суйлав бюллетенĕсĕр пуçне ыттисем пурте юрăхлă шутланаççĕ.

Регистрациленĕ кандидатсем çакăн чухлĕ сасă пухнă:

Иван Ильич Кабуркин – 6.

Юрий Викентьевич Перцев – 93.

Çапла вара Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен» Саккунĕн 2-мĕш статйипе килĕшӳллĕн пĕр мандатлă 4-мĕш Макаçи суйлав округĕпе Ильинка ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутатне Юрий Викентьевич Перцев суйланнă.

Суйлав протоколне Муркаш территори суйлав комиссийĕн председателĕ А.В. Андреев тата секретарĕ В.К. Сорокина алă пусса çирĕплетнĕ.

**Саламлатпăр**



Юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене – Сентимĕр ялĕнче пурăнакан **Алевтина Николаевна ЗАЙЦЕВАНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнма уйăх пек çутă кун-çул, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 4 мăнукĕ, хăтитăхлачисем, тăванĕсемпе кӳршисем.**